Юрий СКВОРЦОВ:

# «ЮРĂ ПУÇЛАСА ЮРЛАРĂМ...»



Пĕррехинче Чăваш телевиденийĕн режиссерĕ Владимир Карсаков шăнкăравларĕ. Вăл Юрий Скворцовăн «Сурăм хĕрĕ» повеçĕ тăрăх кино ӳкересшĕн иккен. Тĕл пултăмăр, паллашрăмăр, пĕр сехет ылта «Шупашкар» универмаг çумĕнчи кафере шăллăм çинчен калаçса лартăмăр. Эрне те иртмерĕ – Муркаш районĕнчи Хурăнкасси ялне кайса килтĕмĕр, тепĕр уйăхран Владимир Карсаков мана кино ӳкернине курма чĕнчĕ.

–Мĕншĕн кино валли повеçе суйласа илтĕр? – ыйтрăм эпĕ унран.

–«Сурăм хĕрĕ» повесть, Сухви сăнарĕ маншăн чăваш чунĕн эталонĕ, – терĕ вăл. – Чăваш чунĕ – вăрттăнлăх. Никамшăн та вăл яр уçă пулман. Юрий Скворцов вара Сухви тĕнчине витĕр курнă пекех çырса кăтартнă. Сухвире чăваш психологийĕ.

Сухви... Эпĕ «Сурăм хĕрĕ» повеçе мĕнле çырнине аса илтĕм. Ун чухне эпир Шупашкарти Плеханов урамĕнчи пĕчĕк çуртра иккĕн пĕрле пурăнаттăмăр. Хуçи, типшемкке ватă карчăк, хваттере вырнаçсан пире çапла каларĕ: «Çак пӳлĕме ĕлĕк эпĕ Аркадий Эсхельпе Михаил Юрьева пурăнма кĕртнĕччĕ».

Шăллăм пединститут студенчĕччĕ, тин çеç юлашки курса куçнăччĕ, эпĕ «Çамрăк коммунист» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Пушă вăхăт пулманпа пĕрехчĕ, анчах Юрий çав-çавах сăвă е калав çыркалатчĕ. Сухви сăнарĕ те çав хваттертех çуралчĕ.

Авлансан шăллăм урăх хваттере куçрĕ: пĕр хĕрарăм вĕсене Тургенев урамĕ хыçĕнчи çырмара ларакан кивĕ мунчара пурăнма ирĕк пачĕ. Çавăнта вăл çырчĕ «Сурăм хĕрĕ» повеçе. «Çĕрле çырса ларатчĕ, – каласа паратчĕ ун мăшăрĕ, – чĕлĕм туртса тултарсан пĕчĕк пӳлĕмре сывлама та çукчĕ».

Мана ытларах Плеханов урамĕнчи хваттер аса килет. Çуллахи каникул хыççăн пурăнма пуçларĕ шăллăм унта. Кĕркунне вăл Ишлейри вăтам шкула педагогика практикине кайрĕ. Шупашкара канмалли кунсенче çеç килсе каятчĕ. Калаçма та вăхăт çукчĕ унăн – килсенех сĕтел хушшине кĕрсе ларатчĕ те çырма тытăнатчĕ. Шкул пурнăçĕ çинчен çыратчĕ, 9-мĕш класра вĕренекен хĕр ача çинчен. Çапла калăпланма пуçларĕ «Хĕрлĕ мăкăнь» повесть. Çав повеçе ман Р.Фраерманăн «Дикая собака Динго» повеçĕпе танлаштарас килет.

«Сурăм хĕрĕ» кĕнеке 1959 çулта тухрĕ. Унта Юрий Скворцовăн «Уках хурăнĕ» повеçĕ те кĕнĕччĕ, анчах набора ярас умĕн ăна каларттарчĕç. Политика йăнăшĕ шыракансене автор вăрçă вăхăтĕнчи яла, Укахви сăнарне хăюллă сăнласа пани килĕшмен. «Юрий Скворцов халăх пурнăçне тĕрĕс мар ӳкернĕ», – тенĕ тахăшĕ.

«Кĕнекӳнтен пĕр повеçне кăларса пăрахнăшăн питех хуçăлма кирлĕ мар», – лăплантарнă автора хăйĕн çырăвĕнче Макар Хури поэт.

Кĕнеке кăларма çăмăл марччĕ. Апла пулин те Юрий Скворцов чăваш литературине харăсах икĕ кĕнекепе – «Сурăм хĕрĕ» тата «Çурхи салам» – пырса кĕчĕ: пĕрне пичете 1958 çулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнче ал пусса янă, теприне – икĕ кун маларах, сентябрĕн 24-мĕшĕнче.

Юрий студент чухнех хăюллăччĕ. Унăн ирĕклĕ шухăшĕсене, хăш-пĕр сăввине редакцисем тиркетчĕç. Ман умра Муркаш районĕнче тухса тăнă «Колхозник сасси» хаçат. Ăна 20 çул каялла хаçат сотрудникĕ Авдеев панăччĕ. Юрий Скворцовăн унта виçĕ сăвă: «Аслă Сталин», «Çĕнелет çĕршывăм», «Саватпăр мирлĕ пурнăçа». (Хаçачĕ 1953 çулхи мартра, Сталин вилнĕ уйăхра, тухнă.) «Вĕсене Семенов редактор пăрахăçларĕ», – тенĕччĕ Андреев.

Çав сăвăсене эп тепĕр хут вуласа тухрăм, анчах нимле усал шухăш та тупаймарăм. П.Семенов редактора çав сăвăсенчи «юрла, чĕрем, юрла хаваслăн» йĕркесем тата сăвă ячĕсем килĕшмен-ши? Сталин вилнĕ хыççăн хурлăхлă кунсенче политика енчен вырăнсăр тенĕ пулмалла.

Тепĕр тĕслĕх. 1955-1959 çулсенче эпĕ «Çамрăк коммунист» хаçатра ĕçленĕ. Пĕррехинче Юрка мана хăйĕн тин çеç çырса пĕтернĕ «Юрăç Васса» калавне кăтартрĕ. Пĕр сыпăкне эпĕ хаçатра пичетлемешкĕн ыйтрăм. Вăл пачĕ. Ăна тӳрех набора ятăм. Тепĕр кунне редактор командировкăран таврăнчĕ те набора салатма хушрĕ. Шăллăма, Геннадий Айхи сăвăçпа туслăскере, унпа пединститут общежитийĕнче студентсен умĕнче сăвăсем вуланăшăн КГБна чĕнтернĕччĕ. Апла пулсан Юрий Скворцов – шанчăксăр. Сăлтавĕ çав çеç.

КГБра унпа кăмăллă калаçнă пулин те çыравçăшăн йывăр самана пуçланса кайрĕ. «Мускавра çӳçсене касаççĕ пулсан, пирĕн – пуçсене», – тесе ахальтен мар каланă. Кĕçех шăллăма ĕçрен кăларчĕç. Идеологсем унăн пичетленекен хайлавĕсене тимлĕнрех пăхма тытăнчĕç: усал тăвасси çыравçăсем хушшинче пулнах ĕнтĕ.

Тишкерӳçĕсенчен чи малтан Михаил Юрьева палăртмалла. Унпа эпир «Çамрăк коммунист» хаçатра çулталăк ытла пĕрле ĕçленĕ. Вăл манран çулпа аслăрахчĕ, редактор çумĕччĕ. Пĕрпĕрне хисеплеттĕмĕр. Юрий Скворцов кĕнекисем пирки вăл икĕ рецензи çырчĕ: «Васкани чыс тумасть» («Уках хурăнĕ») тата «Хо-

зиловсемпе аленецевсем чăнах пур-ши?» («Çын ăшши»). Михаил Иванович «Коммунизм ялавĕ» хаçатра литературăпа искусство пайне ертсе пыратчĕ. Юрий Скворцовăн пĕр кĕнекине те асăрхамасăр хăвармастчĕ.

Манăн тата «Пурнăç чăнлăхне пăссан» тата «Чи кирли – чăнлăх» статьясене те асăнса хăварас килет. «Чи кирли – чăнлăх» статьяра «Сăваплă вут» историллĕ повеçе тишкернĕ. «Кунта пире пуринчен ытла тахçанхи çĕрĕк шухăшсене тимлесех çырса кайни тĕлĕнтерет», – тенĕ унта Валентин Уçăм журналист. «Чăвашсен тĕнне автор «çĕрĕк шухăш», «пăнтăх шăршă», «сĕрĕм» тесе хак парать, – терĕ Юрий, статьяна вуласа тухсан. – Хамăр ăрусем пирки çапла калатпăр пулсан – камсем эпир?»

Иван Григорьев писатель «Пурнăç чăнлăхне пăссан» статьяра «Хĕлĕх хўре кăвакал» калава тишкерет, ăна идея тĕлĕшĕнчен тĕрĕс мар çырнă тесе хурлать.

Çав статья тухнă кун эпĕ Пичет çуртĕ патĕнчи хаçат витрини умĕнче чарăнса тăтăм. Умра Юрий тăратчĕ, тимлесех хăйĕн калавĕ çинчен çырнине вулатчĕ.

–Çав калавра та политика тупнă, – терĕм эпĕ.

–Эстетика туйăмне аса илет Григорьев, – терĕ Юрий кулараххăн. – Сарă хĕрри тĕрлесе тĕрре пĕлмене ан кўрентер çав...

Хăйĕн критикĕсене Юрий Скворцов «Çын ăшши» повеçри Аленецев ячĕпе витĕнсе çапла хуравлать: «Эстетика енчен тĕттĕм, примитивлă тиркевчĕ ку. Вăрçăччĕç вĕсем тўркессĕн... Никам та марччĕ вĕсем маншăн. Анчах вĕсен тем ĕç пурччĕ вара манпа: кĕвеçўпе курайманлăхне янăравлă лозунгсем айне пытарма тăрăшса хăйсем пурнăçра çав тери пысăк ĕçшĕнтĕллевшĕн хыпса çуннă пек курăнатчĕç вара».

Хаяр тишкерўçĕсем ·çапса хуçаймарĕç Скворцова. Хăйĕн принципĕсене вăл нихăçан та улăштарман. Икĕ питлĕ çын пулман. Никама та юрама тăрăшман. Çивĕч ыйтусем хускатма та хăраман. «Юрий Скворцов писатель 1960 çулсенче хăйĕн произведенийĕсенче чăваш чĕлхине хўтĕлеме хăюлăх çитернĕ» (Аристрарх Дмитриев. «Тăван Атăл», 1990, 2№, 52 с.).

Ю.Артемьев профессор «Страсть к полемике» кĕнекере çапла çырнă: «Судьба таланта – не купанье в лучах славы, а огромное чувство ответственности перед народом, культурой. Тем не менее Ю.Скворцов среди чувашских литераторов знал и таких, кто, заимев все мыслимые и немыслимые награды и звания, получая бешеные гонорары, позволял в дневниковых записях циничное признание, что «не верит в будущее чувашской поэзии».

Каламалли пайтахчĕ унăн. Анчах ăна ăнланакан çынсем сахалччĕ. Çавна пулах ĕнтĕ ĕçре те, килте те канăç тупаймастчĕ вăл.

Юлашки хут вăл ман пата 1977 çулхи июль уйăхĕнче кĕчĕ. Ман çуралнă кунччĕ. Аллă тултарнă ятпа мана саламларĕ, виçĕ тĕслĕ çыракан авторучка парнелерĕ.

Юн юна шыратăр, тенĕ,
Тăвана шырать тăван.
Эй, тăванăмçăм-пĕтенĕм,
Тайăлар тытса хулран.

Юрккан çак сăмахĕсене эп манаймастăп. Магнитофонран Владимир Высоцкий сасси янăрарĕ: «Вдоль обрыва, по-над пропастью, по самому краю...»

Ăна юлашки çула ăсатнă чух Николай Евстафьев поэт сăвă вуласа пачĕ:

Хăй çуралнă, ўснĕ çĕр çине
Мăкăнь усрĕ йăм кĕрен пусне.
Çĕкленеймĕ çĕнĕрен вăл тек,
Илĕртеймĕ куçсене чечек.

Аça çапрĕ мирлĕ йăвана,
Хуçса кайрĕ тăвăл юмана:
Ăшшăн, лăпкăн пăшăлтатнă пек
Симĕс çулçă чăштăртатмĕ тек.

Çепĕç саслă шăнкăрчăн юрри
Татăлчĕ, шăпланчĕ ун чĕри:
Хĕвеле кĕтсе юрланă пек
Сас параймĕ пирĕн Юра тек.

Сывпуллашма килнисем темĕн чухлехчĕ, Мускавран Писательсен союзĕ те хуйхăрса телеграмма янăччĕ.

Шăллăмăн тĕрлĕ вăхăтри сăн-сăпачĕ кино экранĕ çинчи пек куç умĕнче курăна-курăна иртрĕ. Акă вăл вăрçă вăхăтĕнчи Хурăнкасси ялĕн урамĕ тăрăх çара уран чупса çўрекен ача, акă Патăрьел районĕнчи Первомайски вăтам шкулĕнче вĕренекен çамрăк. Хурăнкассинче вăл тăван аттесĕр, Первомайскинче – тăван аннесĕр ўсрĕ. Ама çури, аçа çури, ывăл çури – çак сăмахсем пуça килеççĕ çав тапхăра аса илсен.

Первомайскине атте патне пурăнма куçман пулсан, кам пĕлет, пулатчĕ-ши Юрий Скворцов писатель? Тен, юрăç Ваçça пек яланлăхах колхозра ĕçлеме юлатчĕ, тен, хăйĕн тепĕр калавĕнчи ăста атăçă Паня пек çынсене атă-пушмак çĕлесе савăнтаратчĕ? Çакăн çинчен шухăшлатăп та – тĕлĕнетĕп çеç. Мĕнле çав пиллĕкмĕш класра çеç вĕренекен ача, ял таврашĕнчен аяккарах ниçта та тухса курманскер, пĕчченех çавнашкал инçе çула тухма пултарнă? Канашран поездпа Буинска çитсен – çĕрле, хĕллехи сивĕре – вăрман витĕр 25 çухрăм çуран утнă.

Хурапа шурра тўссе ирттерни Юрий Скворцова тĕнче çине чарăлнă куçпа пăхса пурнăç çивĕчрех туйма, çын чунне ăнланма, чĕре каланине итлеме, йăнăшнă çынна каçарма вĕрентнĕ. Чун ыратнине хут çине çырса кăтартасси вара уншăн чи пысăк ĕç пулса тăрать: çыравçă тивĕçĕ – çынна юратасси, ўкнĕ çынра та çынлăх тивĕçне вăратасси, кашни çынра пархатар тупасси. «Пурнăç сюжетсăр, – тетчĕ шăллăм. – Ман калавсем те сюжетсăр».

«Юрă пуçласа юрларăм», – тесе çырнăччĕ вăл çамрăк чух хăйĕн пĕр сăввинче. Шел, юррине вĕçлеймерĕ. Çĕре кĕриччен юлашки повеçне çавçавах çырма ĕлкĕрнĕччĕ. Ятне тупайманччĕ-ха, анчах машинистка валли тирпейлĕ çырса хăварнăччĕ. Эп курнăччĕ ăна, алла тытса пăхнăччĕ, кăштах вуланăччĕ. Çав повеçе мĕнле çырни çинчен Юрий мана хăй каласа панăччĕ. Юрату çинченччĕ вăл. Таса, хитре юрату çын чунне тĕкĕр пек кăтартать. Çын мĕнле юратать, тĕнче çине çавăн пек пăхать. Юратма пĕлни те пултарулăх теççĕ.

Ал çырăвĕсем çунмаççĕ тенĕччĕ Михаил Булгаков. Ку вара çунчĕ. Юрий Скворцовăн мăшăрĕ ăна Чăваш писателĕсен союзĕн комиссийĕ валли сĕтел çине кăларса хунăччĕ. «Хĕрлĕ мăкăньрен» те, «Сурăм хĕрĕнчен» те вăйлăрахчĕ çав ятсăр повесть. Юрий Скворцовăн чăн-чăн акăш юрриччĕ вăл.

***Аркадий СКВОРЦОВ,***
***писатель, ЧР культурăн***
***тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.***

Сăн ўкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): М.Удалов, Г.Айхи, Ю.Скворцов.